**Ял хуçалăх аталанăвĕ – Муркаш Енĕн пĕрлехи тĕллевĕ**

# Район пуйăнать, малашлăхалла пăхать

*Эпир пĕчĕккĕ чух пирĕн атте-аннесемпе асатте-асаннесем кунсерен колхоза ĕçе васкатчĕç, темĕнле ĕç пулсан та тиркеместчĕç, пĕтĕм вăйпа ăна вăхăтра пурнăçлатчĕç. Кĕске вăхăтра мĕн пысăкăш улăхсене çавапа çулса тирĕтетчĕç, çĕрĕ-çĕрĕпе тырă алатчĕç те хулана машини-машинипе çĕнĕ çăкăр ăсататчĕç, кĕр çитсен тата мĕн чухлĕ çĕр улми алăпа кăларса патшалăха сутатчĕç. “Çĕре хăвăн ачуна юратнă пек юратмалла, вара вăл хăйĕнне тавăратех. Ĕçе вăхăтра тусан, пĕлсе те юратса ĕçлесен, Туррине пулăшса пыма ыйтсан, пĕтĕмпех пулать. Çĕр çинче ĕçленĕ чух вăйăрсене ан шеллĕр, пире çĕр вăй парса тăрать”,– тетчĕç пурнăç тути-масине курнă аслăрах ăрури çынсем. Пурнăç тăтăш улшăнать пулин те, халăх туптаса çитернĕ çак чăнлăх паян та кивелмест. Ăна манманнисем аталану çулĕпе малтан мала каяççĕ, çĕнĕлĕх çулĕсем уçса ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ. Пĕрлехи вăйпа çакнашкал тăрăшса ĕçлесе район çултан-çул ÿсĕмлĕ аталанса пырса çĕнĕ чикĕсем çĕнсе илет, хăйĕн ят-сумне ÿстерет. Вуншар çул малараххах çапла пуçланнă йĕркене паян та алăран вĕçертмесĕр тытса пырса Муркаш тăрăхĕ республикăра та, Раççейре те яланах малтисен шутĕнче.*

*Ăнăçу çулĕпе малтан мала каяс тесен, кÿршĕ ĕçне пăхмалла, унăн çĕнĕлĕхĕсене тишкермелле, тивĕçлипе хакламалла, кун-çул уттинчен юлмасăр çĕнĕлĕхсене алла илмелле. Çакна районти хуçалăхсем пĕри тепринчен ăнсарах туса пыма тăрăшаççĕ. Халĕ калани уй-хирте ĕçленĕ çĕрте курăннипе пĕрлех обществăлла выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçре те кайри рете юлса пымасть. Ĕçре пуян опыт пухнисене çамрăксем таптаса пыраççĕ. Хирĕçлемелли çук – аталану ку! Çак чăнлăха юлашки кунсенче хуçалăхсенче иртнĕ пĕр Акатуй тата районта ĕнесене машинăпа сăвакан операторсемпе хуçалăхсенчи техник-осеменаторсем хушшинче çуллен иртттерекен конкурс тĕслĕхĕ çинче кăтартса парас терĕм.*



Район пуçлăхĕн Ю. Ивановăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе асăрхаттарăвĕсем кашниншĕнех вырăнлă.

ÇĔРТМЕ УЙĂХĔН 2-мĕшĕ. Ĕçлекене Турри те курать, теççĕ те, Шашкарсем тĕлĕшпе шăпах çапла пулса тухрĕ. Акара мал туртăмлă ĕçпе палăрнă хуçалăх ĕçченĕсен çурхи уй-хир ĕçĕсене пĕтĕмлетсе ирттернĕ Акатуй уявĕ те уяр кунпа тÿр килчĕ.

Кун утти хăй юрттине чакармасть: ĕлкĕрсе пыр кăна. Акă, пĕр-икĕ эрне каялла кăна-ха уй-хирте çурхи акасуха шавĕ тăратчĕ пулсан, паян хирсем ешĕл тум тăхăнса пыраççĕ, çур акире вăй хунă ĕçченсене хăйсен ку таранччченхи ĕçĕсене пĕтĕмлетнипе пĕрлех ял хуçалăх культурисене тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстерессипе малалла ĕçлеме ыйтаççĕ: çур аки ирттернипех сĕтел çине çăкăр пымĕ! Пурнăç таппине “Волга” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра самантлăха та манмаççĕ: акă, Акатуй кĕрлеттерĕç те хуçалăх вăйĕсене çумпа кĕрешме явăçтарĕç, выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе кÿлĕç. Çакна общество ертÿçи Юрий Вячеславович Данилов çур аки ĕçĕсене пĕтĕмлетсе каланă сăмахĕнче уçăмлăн палăртрĕ.

– Ака-суха тăвасси пĕччен пурнăçламалли ĕç мар. Çавăнпа та уй-хирте çур аки



Ака пĕтĕмлетĕвĕ кашниншĕнех кăсăклă.

экзаменне ăнăçлă тытма пулăшнăшăн паян пурне те çĕре çити пуç тайса тав тăватăп. Малашнехи ĕçсенче те пĕр çын пек ĕçлесен кĕрхи пÿлмесем тулли пуласса шанатăп. Çакна валли пирĕн вăйсем те, майсем те çитеççĕ, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче Ю. Данилов пухăннă ĕçченсене савăнăçлă кану сунса. Пытармасăрах калатăп, “Волга” хуçалăх ĕçченĕсен паян кăмăла ирĕке ярса канма сăлтавĕ те пур: вĕсем хăйсем умне лартнă çурхи ака-суха ĕçĕсен планне пурнăçланă. Мĕнле цифрăсемпе хаклама пулать-ха ăна? Хуçалăх ĕçченĕсем агротехникăпа килĕшÿллĕн кĕске вăхăтра 504 гектар çинче çурхи ака-суха ĕçĕсене пурнăçланă. Уйрăммăн илсен, 30 гектар çĕр улми лартнă, 5 гектар выльăх кăшманĕпе 2 гектар хĕрлĕ кăшман акнă, ыттине вара тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсем, пĕр çул ÿсекен куракçемпе выльăх апачлĕх культурăсем йышăнаççĕ.

– Хамăр вăрлăхпах акрăмăр. Çур акинче Геннадий Александрович Сеньковпа унăн ывăлĕ Дмитрий хăйсене çирĕплетсе панă “хурçă утсемпе” пысăк хастарлăх кăтартрĕç, акара тĕп вăй пулса тăчĕç. Вĕсен сеялкисем çинче ĕçленĕ Галина Архиповапа Николай Вершков та ырă ята тивĕçлĕ. Акаçăсен ĕçĕ чарăнса ан тăтăр тесе А. Пайков, В. Чернов, В. Пинарин, В. Яковлев механизаторсем çĕр хатĕрлессипе ырми-канми вăй хучĕç. “Иккĕмĕш çăкăр” пуссинче те Геннадий Сеньков механизатор ырăпа палăрчĕ. Вăхăтра акни-лартни, çак ĕçре чылай çĕрте минераллă удобренипе усă курни, акасуха хыççăн çумăрсем пулни тухăç шантараççĕ,– терĕ хăйĕн сăмахĕнче хуçалăхăн тĕп агрономĕ Л. Ильина.



Алексей Матвеевич Мухин газоэлектросварщикăн çур акине хатĕрленес тапхăрти тата хирте ĕçсем пынă вăхăтри тÿпи пĕчĕк мар.

– Шашкар тăрăхĕсем, сирĕн паян пысăк уяв. Çĕр ĕçĕ яланах йывăр пулнă, пур, пулать те. Анчах тĕллевлĕ ĕçлесен ăнăçу та юнашарах. Çакăнпа пĕрлех патшалăх пулăшăвĕпе анлăрах усă курсан, килти хушма хуçалăхсене патшалăх паракан кредитсене илсе аталантарсан, ял çыннисем те, хуçалăх та пуянрах пулĕ. Ку таранччен ăнăçлă ĕçленине кура çак çĕнĕлĕхе те алла илсе тупăш тăвасса шанатăп,– терĕ хăйĕн саламлă сăмахĕнче хуçалăх Акатуйне пынă райадминистраци пуçлăхĕ Ю. Иванов.

...Шанăç шанчăк çуратать теççĕ те, куратпăр, шанчăк çуралчĕ. Шанчăк пурнăçа кĕресси вара ĕçпе çыхăннă...



Конкурсантсен ăмăртăвне ăстасем хаклаççĕ.

**ÇĔРТМЕ УЙĂХĔН 3-мĕшĕ. Чапаев яч. хис. хуçалăхăн Отарккăри сĕт ферми. Çак кун район администрацийĕн ял хуçалăх управленийĕ асăннă вырăнта пĕрлешÿллĕ хуçалăхсенчи техник-осеменаторсемпе ĕнесене машинăпа сăвакансен ырă йăлана кĕнĕ çулленхи ăмăртăвне ирттерчĕ.**

КĔСКЕ СПРАВКА. Отарккăри сĕт фермине юлашки икĕ уйăхра Елена Витальевна Емельянова ертсе пырать. Пĕр вăхăтрах вăл осеменатор та, лаборантка та, кирлĕ пулсан – доярка та. Фермăра сумалли ĕнесем 175 пуç, 33 тынашка, 12 пăру. Вĕсене пăхассипе пурĕ 22 çын ĕçлет.

Ăмăртăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ĕç тивĕçĕсемпе ял хуçалăх управленине те ертсе пыракан А. Н. Иванов уçрĕ.

– Ырă йăлана кĕнĕ пурнăç ыйтакан çак лайăх конкурса кун йĕркинчен кăларманни эпир пурсăмăр та малалла пăхнине çирĕплетет. Пирĕн паян тĕллевсем пысăк. Пурнăç паян пĕр вырăнта тămасть. Çĕнĕ технологисемпе хĕçпăшалланса кÿршĕсем пирĕнтен иртсе каймĕç-и? Çĕнĕреххине хамăр вăйпа мĕн пурнăçа кĕртейретпĕр? Паянхи конкурса хутшăнса пирĕн çак ыйтусем çине хурав памалла,– терĕ Альберт Николаевич пĕлтĕрхи çĕнтерÿçĕсене “Чемеево” хуçалăхри А. Ефремов доярпа “Восток” хуçалăхри Т. Семенова техник-осеменатора ăмăрту пуçласа Чăваш ялавне çĕклеме чĕнсе.

Конкурсра техник-осеменаторсемпе ĕне сăвакансем хăйсен ăсталăхĕпе пултарулăхне икĕ ушкăна пайланса кăтартрĕç пулин те, вĕсем хастар иртрĕç. Уйрăммăн илсен, конкурса килнĕ дояркăсем теори пĕлĕвне пăхнă хыççăн сĕт сумалли аппарата вăхăтпа сÿтсе пуçтарассипе тата ĕне сăвассипе, техник-осеменаторсем хăйсен ĕç йĕркипе тата ĕнесене искусствăлла майпа



“Рассвет” агрофирмăри Валентина Блинова доярка конкурсра хăй ăсталăхне туллин кăтартрĕ.

пĕтĕлентерес культура пĕлĕвĕпе ăмăртрĕç.

Конкурса хутшăнакансем ăмăртăвăн нихăш енĕпе те çухалса кайманни вĕсем хăйсен ĕçĕнче чăн ăстасем пулнине çирĕплетрĕ. Çапах та ăмăрту ăстараххисене палăртмасăр та иртмерĕ. Машинăпа ĕне сăвакан операторсем хушшинче пуринчен те правуртараххи “Оринино” хуçалăхри Галина Пантелеймоновна Ковалева пулчĕ. Хыççăнхи вырăнсенче Суворов яч. хис. хуçалăхри Валентина Макарова тата Чапаев яч. хис. хуçалăхри Людмила Егорова. Çамрăк дояркăсем хушшинче “Герой” хуçалăхри Наталья Рыжкована çитекенни пулмарĕ. Ильич яч. хис. хуçалăхри Зинаида Семеновапа К. Иванов яч. хис. хуçалăхри Светлана Соловьева иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче. Техник-осеменаторсем хушшинчи хĕрÿ ăмăртура “Ударник” хуçалăхри Валентина Алексеевна Димитриева пĕлĕвĕпе те, ăсталăхĕпе те ытларах палăрса тăни курăнчĕ. Кунта 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсенче Ленин яч. хис. хуçалăхри Калерия Петровна Димитриевапа “Восток” хуçалăхри Татьяна Николаевна Семенова.

Конкурс ăнăçлă иртрĕ. Ăна тивĕçлĕ шайра ирттерме пулăшнăшăн ăмăрту йĕркелÿçисем Чапаев яч. хис. хуçалăх ертÿçине В.П. Морозова, вырăнти ферма ĕçченĕсене ăшшăн тав турĕç.



Çĕнтерÿçĕ-дояркăсем: В. Макарова, Г. Ковалева, Л. Егорова.



Çамрăк çĕнтерÿçĕсем: С. Соловьева, Н. Рыжкова, З. Семенова.



Илемлĕ юрă-кĕвĕ выльăх пăхакансен уявне илем кÿчĕ.



Ăста техник-осеменаторсем: Т. Семенова, В. Димитриева.

**Район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертÿçи Анатолий БЕЛОВ.**